К С(ЧУВ)
А94
30431-чув

Порфирий Афанасьев

# ЯРАПАЛЛĂ ЙĂМРА



Национальная библиотека ЧР
4-030431



30431

Возвратить книгу не поз
обозначенного здесь ср

С (чув)
А 94

Порфирий Афанасьев

# ЯРАПАЛЛĂ ЙĂМРА

САВАСЕМПЕ ПОЭМАСЕМ



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1987

ББК 84 Чув 7—5
А 94



ПРОВЕРЕНО 30431-чув.
20 г. 11 ОКТ 2017
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

А $\frac{4803010200—090}{М 136(03)—87}$ 80 — 87

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1987 ç.

## ЯРАПАЛЛĂ ЙĂМРА

Аякра, пит аякра —
Эп çуралнă çĕршывра
Шерепеллĕ, ярапаллă
Ķашласа ларать йăмра.

Ытарма та çук хитре —
Пĕрре çеç вăл тĕнчере,
Час-часах ăна куратăп
Хамăн тутлă тĕлĕкре.

Çав йăмра хӳтлĕхĕнче,
Сĕнче шывĕ хĕрринче,
Те çĕр ĕмĕр, те пин ĕмĕр
Çăл тапать çĕр айĕнчен.

Ун шывне ĕçен кăна —
Пыл та кирлĕ мар сана.
Вăл чĕртсе ярать сасартăк
Санăн ывăннă чунна.

Çав асамлă çăл патне
Ирсерен анать анне.
Ĕнтĕ туйрăр-и, туссемĕр,
Манăн тупсăх тупсăмне?

## АННЕМĔР

Çуркуннепе анне сăнарĕ
Мана пĕр евĕр туйăнать.
Телей сунса, аннемĕр мар-и
Çурхи кун пек пире лăпкать?

Çут хĕвелпе анне сăнарĕ
Мана пĕр евĕр туйăнать.
Ытарайми аннемĕр мар-и
Чун ăшшине пире парать?

Çĕршывпала анне сăнарĕ
Мана пĕр евĕр туйăнать.
Çĕршывăм пек аннемĕр мар-и
Пире вăй-хал парса тăрать?



## ТЫМАР СĔТКЕНĔ

Эпир — çĕртен, шывран та сывлăшран.
Эпир — хĕн-асапран, йăл кулăран,
Эпир — кĕвĕçӳрен, юратуран,
Эпир — тăнăçлăхран, çапăçуран.
Эпир — пит аякри авалăхран.

Тымар сĕткенĕ пĕтĕмпех упрать:
Манра — ман несĕл хурлăхĕ-ырăтăвĕ,
Манра — ун çутă шанчăкĕ-юратăвĕ,
Манра—ун чăнлăхшăн çуннин пăлханăвĕ.
Ман несĕл чунĕ-кăмăлĕ — манра.

Килет çак аслă пурнăç тымартан.
Ман ывăлра та — ман таса сăпайлăхăм,
Ман ывăлра та — манăн курайманлăхăм.
Эппин, пуласлăхра та сĕм аваллăхăн
Кăварĕ сӳнмĕ.
Пĕл çавна, тăшман!



## ПĔЛЕТĔП...

Ишет кăна пăлан, ишет пăлан
Майракине шывран илмесĕр.
Кĕтрĕм сире, тăван, кĕтрĕм тăван,
Чӳречерен куçа илмесĕр.

*Халăх юрринчен*

Пăланĕ ишнĕ-и, ишмен-и
Çак чĕлтĕр-чĕлтĕр Сĕнчере,
Анчах пĕлетĕп: çук иккенĕ
Тăван çĕршывăн, савнă енĕн
Ашши пек ăшă тĕнчере.

Тăванĕ кĕтнĕ-и, кĕтмен-и
Куçне илми чӳречерен,
Анчах пĕлетĕп: çук иккенĕ
Анне пек хытă кĕтекенĕ
Никам та çакă тĕнчере.





## ЭХ, ПУРА ПУРАСЧĔ МАН...

Эх, пура пурасчĕ ман,
Эх, пурасчĕ,
Никĕсне кĕреш юман,
Эх, хурасчĕ.

Эх, пура пурасчĕ ман,
Эх, пурасчĕ,
Çăкаран е хырăран
Хăпаргасчĕ.

Эх, пурасчĕ пурине,
Эх, пурасчĕ,
Кантăкне хĕвел енне,
Эх, касасчĕ.

Эх, пура пурасчĕ ман,
Эх, пурасчĕ,
Тăррине чăпар автан,
Эх, лартасчĕ.

Эх, пурасчĕ пурине,
Эх, пурасчĕ,
Туссене кĕрекене
Йыхăрасчĕ.

Эх, пура пурасчĕ ман,
Эх, пурасчĕ,
Ялйышпа килĕштерсе
Пурăнасчĕ.

Эх, пурасчĕ пурине,
Эх, пурасчĕ,
Пӳрт тулли ачасене
Ыр тăвасчĕ.

Эх, пура пурасчĕ ман,
Эх, пурасчĕ,
Çĕнĕ вăрçă тухасран
Хăрас марччĕ.

...Çак юрра эп кӳршĕрен
Пĕлтĕр илтрĕм.
Пӳрчĕ ун паян — кермен,
Ĕмĕт çитрĕ.

Тем те чăтнă кӳршĕ ман,
Тем те курнă.
Мĕн тери иккен аван
Мирлĕ пурнăç.



## САПКА ЮРРИ

Ан шавлăр, вагă чăрăшсем,
Ан çапăр çырана, хумсем.
Ан чĕриклетĕр, шăрчăксем,
Ан вĕçĕр, чĕвĕл кайăксем.

Хĕвелĕн ăшă аллисем,
Кунта ан çӳрĕр, кайăрсем.
Çилпе ан кашлăр, чечексем,
Çунат ан çапăр, лĕпĕшсем.

Шăп пулăр, ырă кӳршĕсем,
Çитерĕр тӳсĕм, тăвансем,—
Ман пĕчĕк хĕрĕм çывăрать,
Тĕлĕкĕнче сире курать.

## ÇĂЛ ЧАВАТПĂР

Çăл чаватпăр, шыв шыратпăр.
Кунĕ шăрăх. Тарăхатпăр.
Тепĕр си илсессĕнех,
Çăл тапсă тухас пекех.

Анчах шывĕ курăнмасть.
Пăрахар ĕçе. Пулмасть.

Çук. Шырар-ха. Çăл чавар-ха,
Ял куллийĕ пулар мар-ха.
Антăхса та тарласа,
Çăл чаватпăр ăмăртса.

Ак вăл çăл! Шарлантарса,
Тухрĕ кĕмĕллĕн тапса.

Шыв шыратпăр. Шыв тупатпăр.
Ĕç ăннишĕн савăнатпăр.
Килĕр, ĕçĕр! Шăрăхра
Кăшт пусарăр чунăра.

...Шывĕ килĕшрĕ пулсан,
Пирĕн ĕç сая кайман.





* * *

Мухтав сана, пĕрчĕ,
Эс пурнăç хăвах
Эс шăтăн, эс ĕрчен,
Кĕтгермĕн вăрах.

Ем-ешĕллĕн тухăн.
Çурхи тĕнчерен
Е ăшă, е сулхăн
Эс ыйтăн куллен.

Çĕкленĕн патваррăн
Çӳлтен те çӳле,
Çапла пуç кăларăн
Çу çитнĕ тĕле.

Хаваслăн хумханăн
Хĕвел хӳттинче.
Пĕрре эс кун парăн
Вĕр-çĕнĕ пĕрче.

Йĕс пек çирĕпленĕн,
Эс куçăн тырра,
Ахахăн, хĕвелĕн
Çутатăн вара.

Çав çутă пуль кĕчĕ
Поэт чĕрине.
Мухтав сана, пĕрчĕ,
Мухтав ĕмĕрне!



## ÇЫННА ЫРĂ ТУ

Çынна хуйхă пусать.
Çын — пĕччен çĕ. Аптрать.
Çыннăн —
Çын чăгайми çухату.
Саспа мар, чĕрипе
Çын сана йыхăрать,—
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Çыннăн — пысăк телей.
Çын — çын пек хĕпĕртет.
Чĕрине
Шăнăçмасть юрату.
Çын пĕччен савăнмасть.
Юлташне вăл чĕнет,—
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Çын пĕрре йăнăшать.
Йăнăшмасăр утма
Пултараймăн эс ху та,
Асту.
Çав çынна пулăшма,
Йăлт куçран калама
Эс васка ун патне. Ырă ту.

Çын çынпа пурăнать.
Çын çынпа савăнать.
Çын!
Хăватлăн янрать сан яту.
Çын юраттăр çынна,
Хисеплетĕр çынна;
Çын патне эс васка. Ырă ту.

# Август

*Хветĕр Уяр*

Август уйăхĕн хăйĕн илемĕ.
Ирĕсем хăйне евĕр хитре.
Атăл çийĕн çĕклемĕн-çĕклемĕн
Хăпарать кăпăш шурă тĕтре.

Уяртать. Тӳпе тăрă та çӳллĕ.
Пăрахать вылямашкăн ăрша.
Инçетри курăнать илĕртӳллĕн,
Уçă çил тасатать сывлăша.

Сасă пар — сасă уçă та ирĕк
Ян кайса, аякра çухалать.
Ылтăн тĕслĕ сап-сарă уй-хирĕн
Ĕçлĕ шавĕ çĕклет кăмăла.

Садсенче панулми кĕрпекленнĕ,
Анса пулнă кăмпа вăрманта.
Çутçанталăкăн сиплĕ сĕткенĕ,
Пилĕ-техĕмĕ — сан умăнта.

Çăлтăр çумăрĕ çулăмлăн çăвĕ,
Шевле çиçĕ тул çутăличчен.
...Август, август, ыр кăмăлла çăвăн
Эс чи чаплă уявĕ иккен.





## ЛЕНИН

Аслă Ленин!—
              Çутă, ирĕк
Пурнăç кăтартса пире,
Кунĕн-çĕрĕн,
              каçăн-ирĕн
Малалла чĕнен чĕре.

Хаклă Ленин!—
              Тăрă пĕлĕт,
Çут хĕвел сунса пире,
Пархатарлă
              чаплă ĕмĕт
Ĕмĕр пиллекен чĕре.

Пирĕн Ленин!—
              Пирĕн парти,
Пирĕн шухăш та тĕллев,
Тĕрĕс çул пире кăтартрĕ
Çут пуласлăх патнелле.

Чĕрĕ Ленин!
          Улăп Ленин!
Нихăçан сӳнми хĕвел!
Эс каллех пире çĕклетĕн
Кулленхи кĕрешĕве.



## ÇЕÇПĔЛ ХЫÇÇĂН

Пĕрремĕш комсомолец маншăн — Çеçпĕл
Чун-чĕрипе тӳп-тӳрĕ пулнăран.
«Пĕл тĕллевне,
Пĕл тивĕçне,
Ĕçне пĕл!» —
Поэт астутарать мана ялан.

Эп Çеçпĕле ачаранпах тăнлатăп,
Утап ун хыççăн ирĕклĕн, патвар.
Шиклентермест мана нимле тăщман та,
Нимле хăрушлăх та хăрушă мар.

Малашлăх çулĕ — вĕçĕмсĕр атака.
Çав çул çинче — поэт ман командир.
Ялав йăтса малта пыран салтакăн
Чысне туйса кĕрешĕпĕр эпир.

Хам пурнăçра эп урăх çул пĕлместĕп:
Ман Çеçпĕл пек тăкасчĕ хĕм-кăвар.
Ĕç-пуçăм никама та илĕртмест-тĕк —
Эп комсомолец та, поэт та мар.



## АВТОНОМИ ЮБИЛЕЙĔНЧЕ

Истори урапи — шав малаллах.
Пĕр чарăнми шаккать кунçул сехечĕ.
Телей пехиллекен Ильич декречĕ
Çаплах вăл пирĕн чĕререх, чунрах.

«Чăвашăн — автономи...» Çав хута
Çулпуç ҳăй аллипе пусса парсассăн,
Ентешĕм, эс сывларăн пуль хавассăн,
Хĕвел çуталчĕ пулĕ ăшунта.

Тарăхупа иртни çине пăхса,
Çав кун эс юмахри пек тăтăн пулĕ,
Ялтрарĕ пуль умра пуласлăх çулĕ,
Йышпа мала утмашкăн йыхăрса.

Эс парти чĕннипе çӳлген çӳле
Хăпартăн мар-и, пултаруллă халăх?
Сана çĕклерĕ туслăх та тăванлăх,
Ялан эс пултăн Çĕршывпа пĕрле.

Республика — рабочи те хресчен,
Республика — салтак та чаплă юрăç,
Строитель, космонавт... Анать мĕнпур ĕç
Хĕм сирпĕтен ун ылтăн аллинче.

Паян уяв. Юрла, чăваш, юрла!
Телей юрри юрла, юратнă халăх,
Тăван Совет çĕршывĕ савăнмалăх
Куллен сулмаклăн ут эс тăвалла!

30431-щb.
Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького



## ÇĔНĔ ЗАВОД

Завод пуçланчĕ чăн та паттăр:
Урать хĕл. Хĕрĕх градус сивĕ.
Анчах тапратрĕ экскаватор
Симфониллĕ хăватлă кĕвĕ.

Çак кĕвĕре йĕс чан çаппи те,
Сăпка юрри те пулчĕ пулĕ.
Шăн çĕр тĕпренчĕ шитĕн-шитĕн,
Хĕм сирпĕнчĕ хивре вутчулĕн.

Завод пуçланчĕ!
Çĕлĕк хывăр!
Пуç тайăр çĕр çĕклемĕ умĕн —
Хăш чух, пĕлетĕп, пулĕ йывăр,
Хăш чух, чăнах та, çăмăл пулмĕ.

Анчах кабинăра, куратăп,
Йăл-йăл кулса ĕçлег те йĕкĕт,
Чунтан-вартан шанса тăратăп —
Çĕнтерĕ ĕмĕт!
Чаплă ĕмĕт!



## УТАТЬ ПИЛĔКÇУЛЛĂХ

Утать пилĕкçуллăх рабочи тумпа,
Утти ун сулмаклă та çирĕп.
Утать парти палăрт нă аслă çулпа:
Малта — çут пуласлăх ирĕ.

Кĕрлет пилĕкçуллăх мăн Атăл çинче,
Унта пин-пин çутă куратпăр,
Хăватлăн, мăнаçлăн завод хапхинчен,
Ав, тухрĕ вĕр-çĕнĕ трактор.

Утать пилĕкçуллăх хресчен тумĕпе,
Уйра — ĕç шăв-шавĕ, кĕрлевĕ,
Кĕр çиттĕр, пулатпăр тулли пӳлмепе! —
Хитре-çке хресчен тĕллевĕ.

Утать пилĕкçуллăх. Кăвак инçете
Ыран вăл каллех парăнтарĕ.
Асамлă, инçе çăлтăр çулĕ кĕтет
Сана, тепĕр паттăр Гагарин!

Кĕрлет пилĕкçуллăх. Симфониллĕ сас
Янрать Çĕршыв тăрăх тӳлеккĕн.
Туссем, тăвансем, мире сыхă упрас,
Мир — пирĕн телей тĕрекĕ.

Умри тĕллеве пурнăçлас ĕмĕтпе
Эпир тус-тăванлăн çĕкленнĕ.
Эпир çĕнтеретпĕр! Утать пирĕнпе
Çулпуçăмăр — аслă Ленин.



## ÇĔР—ЭТЕМЛĔХ САПКИ

Çĕршывра чаплă юрă янрать,
Тĕнчене ян каять пин-пин саслăн,
Тĕп хуламăр Мускав тараватлăн
Яшсемпе хĕрсене пуçтарать.

Йалтăркка кăн-кăвак тӳпере
Ярăнать ушкăн шур кăвакарчăн.
Мускавра — тус-тăванлăн та таччăн
Пĕр ретре — пин-пин çамрăк чĕре.

Ку вăл — çамрăклăх. Пирĕн хăват.
Ку — планета пуласлăхĕ, чысĕ!
Курăр: вырăсĕ, негрĕ, индусĕ
Ирттереççĕ чи аслă парад.

«Вăрçă-харçă ан пултăр нихçан!
Пĕт, çухал, «томагавк» тытамакĕ!
Ачасем хĕçпăшаллă салтакăн
Вутĕнчен хăрама çуралман!

Çут хĕвел, çут тӳпе — тĕнчене,
Ешĕл çĕр, тăрă шыв, уçă сывлăш,
Апă çумăр, лĕп çил, çутă сывлăм,
Юнашар — чи телейлĕ анне!

Çĕр — этемлĕхĕн савнă сăпки.
Хуçалантăр унта килĕшӳлĕх,
Ĕмĕт çиçтĕр хитре, илĕртӳллĕ,
Сарлака пултăр ĕмĕр сакки.

Ан çӳретĕр нишли те выççи
Хăй юратнă ĕçне тупаймасăр,
Мулçă мар — ĕççынни, эпĕр хамăр
Çĕр-планетăн чи аслă хуçи!..»

Çĕршывра чаплă юрă янрать,
Вăркăшать аслă туслăх ялавĕ
Çамрăксен пин-пин саслă йыхравĕ
Мускавран тĕнчене саланать.



## ÇИРĔП ТĔЛЛЕВПЕ

Вăй-халăмăр куллен сулмаклă пирĕн,
Алран алла тытса, яланхи пек,
Малашлăха курса, хăюллă, çирĕп
Утатпăр аслă Ленин çулĕпе.

Хăватлăн пĕтĕçсе, тăванлăн-туслăн
Юратнă тăван партимĕр тавра
Хĕм сирпĕтсе ĕçлетпĕр пултаруллăн,
Çĕршыв тĕрекĕ — пирĕн алăра.

Чи аслă тĕллеве аван пĕлетпĕр.
Станок умне тăрсан, уя тухсан,
Çак çутă тĕнчере мир пултăр тетпĕр,
Кăвак тӳпе те савăнăç ялан.

Ача-пăча сасси çурхи илемĕн
Янравĕпе чиперрĕн пĕр пулсан,—
Çак телее пиртен туртса илеймĕ
Нимле нейтронлă бомбăллă тăшман.

Мухтавлă халăх ĕмĕтпе çунатлă —
Хитре ешерекен Çĕршывăмри
Тулли телейĕн тӳпинче хăватлă
Кашни ĕçчен тӳпи те пултăр-и!

Вăй-халăмăр нихçан та чакмĕ пирĕн.
Çула тухатпăр çирĕп тĕллевпе.
Малашлăха курса, хăюллă, çирĕп
Утатпăр аслă Ленин çулĕпе.



## РЕЙХСТАГ ÇИНЧИ ЯЛАВ

Рейхстаг çинчи ялав,
Рейхстаг çинчи хĕрлĕ ялав çут тĕнчене
Хĕвел çути сапсан,
Телей çути сапсан,
Мĕн туйрăн эс, салтак, çавăн чухне?
Çĕнтертĕмĕр! Çĕнтертĕмĕр! Çĕнтертĕмĕр!
Ак çитрĕ тавăру та терĕн пуль.
Чăнах та иртрĕ-ши нушамăр-тертĕмĕр?
Çĕнтертĕмĕр! Çĕнтертĕмĕр! Çĕнтертĕмĕр!
Куçна тӳрех хупларĕ пуль куççуль...
Таса куççуль...
Вĕри куççуль...
Хыçра — тăвата çул,
Умра вара мĕнпур кунçул пулассине
Туйса эс тăтăн пуль,
Эс аса илтĕн пуль
Çапăçура выртса юлнисене.
Рейхстаг çинчи ялав,
Рейхстаг çинчи совет ялавĕ тĕнчене
Хĕвел çути сапсан,
Телей çути сапсан
Каларăн эс, салтак, тăшмансене:
«Çĕнтерĕпĕр! Çĕнтерĕпĕр! Çĕнтерĕпĕр!
Хĕçпех пĕтет хĕçпе хăмсаракан!
Тĕрĕслĕхре те туслăхра—тĕрекĕмĕр,—
Çĕнтерĕпĕр! Çĕнтерĕпĕр! Çĕнтерĕпĕр!
Мир яланах хăватлă вăрçăран!
Çавна, тăшман,
Нихçан ан ман!»



## ВЕТЕРАНСЕМ

Утать хăватлă халăх — çĕлĕк хыв!
Çĕнтерĕве чыслать Тăван çĕршыв.
Кĕрлет янравлă марш
Çӳл тӳпене çити,
Сулмаклăн илтĕнет салтак утти.

Утаççĕ паттăрсем — ветерансем,
Куççуль те савăнăç туганнă аттесем,
Çут тĕнчене вутран хăтарнисем,
Пире телейлĕ пурнăç панисем —
Ветерансем.

Савса хĕвеллĕ тăнăç пурнăçа,
Эсир васкарă çулăмлă вăрçа.
Шăраннă пуль вутра
Е путнă пуль шывра —
Эсир çĕнтернĕ çав çапăçура!

Утаççĕ паттăрсем — ветерансем,
Ылханлă тăшмана çапса аркатнисем,
Çут тĕнчене вутран хăтарнисем,
Пире телейлĕ пурнăç панисем —
Ветерансем.

Паян та хăмсарать тăшман пире,
Йӳç тĕтĕмпе хупласшăн çут ире.
Анчах та хуралта
Тăрать маттур салтак —
Çĕршывăма вăл кĕртмĕ çич юта.

Ĕненĕр, паттăрсем — ветерансем,
Пире телейлĕ савăк пурнăç панисем,
Çĕршыв хуралĕнчи хальхи яшсем
Сире нихçан та манас çук вĕсем,
Ветерансем.

## ÇĔНТЕРỸ КУНĔ

Курни-илтни-ши ку, анне сăмахĕ-ши
Пуçран тухмасть, аса килет ялан.
Киле пырса, хыпар пĕлтерчĕ тахăшĕ:
«Вĕçленнĕ вăрçă... Савăнăç паян».

Атте те ман — салтак.
Тин çеç вăл таврăннă
Фронтран, вилес пек хытă аманса.
Çак хыпара илтсен, вăл, хăйшĕн таврăнăн,
Пĕр вăхăт тăчĕ шăп, шăлне çыртса.

Куçран пăхса, хĕрỹллĕн ыталарĕ вăл
Мана, виç çул тултарнă ачана.
Çỹле çĕклерĕ — йывăрччĕ ыратăвĕ.
Юратăвĕ пăхман пуль сурана.

Курни-илтни-ши ку, анне сăмахĕ-ши?
Атте ытамĕнчен тухса кайса,
Эп халĕ те вĕçетĕп пек шур акăшăн,
Çунатсемпе сулмаклăн авăсса.





## ТĂВАН ХУЛАМĂР ШУПАШКАР

Çуллен ӳссе хитрен çĕкленнĕ
Ытарайми хула çине
Пăхса тăрать аттемĕр Ленин,
Сăнать ун чаплă уттине.

Ан тив, хуламăр пулгăр вăтă,—
Вĕр-çĕнĕ тинĕс хĕрринчен
Яш сăн кĕртсе, хăватлă Атăл
Чӳхет, лăпкать ăна куллен.

Урамсенчи хитре çăкалăх,
Хуркайăк пек карталанса,
Çĕн Атăла салам сунмалăх
Чупса анать пек васкаса.

Кунта — телей ача-пăчашăн,
Чапай çуралнă хулара
Кашни ача пулса курасшăн,
Хăй тав тăвасшăн паттăра.

Чапаев пек эпир те хамăр
Хăюллă пулăпăр, хастар.
...Ялан мал ĕмĕтлĕ хуламăр,
Тăван хуламăр Шупашкар.

Çуллен ӳссе хитрен çĕкленнĕ
Ытарайми хула çине
Пăхса тăрать аттемĕр Ленин,
Сăнать ун чаплă уттине.

# ПИРĔН ЯЛТИ ТИМĔРÇĔ

Пăхма йăваш — шăна та вĕлерейме,
Сăмах çапмасть, итлет вăл ытларах,
Тавлашура хушша-хуппа кĕртеймĕн,
Çынпа вăрçма-и?
Тур çырлахтăрах!

Анчах иртет те ял урамĕ тăрăх,
Ҫашни калпак хывать ун умĕнче.
Йăваш тесе, сăпай тесе ан тăрăр,
Хисепĕ мĕншĕн?— Ыйтăр çынсенчен.

Писеввĕн çĕкленет те шурăмпуçĕ,
Мучи пуçлать черетлĕ çĕнĕ кун.
Çĕре ытарайми саван ик куçĕ
Ик хĕвел пек йăлтăртатаççĕ ун.

Хăй çамрăк мар та, пур-ха вăйĕ-халĕ,
Лаçса пырсан тытать те мăлатук —
Юрлать кăна, юрлать вара сунталĕ,
Çак юрăран хитри мучишĕн çук.

Сăн-питĕнче сахал-и пĕркеленчĕк,
Суран сахал сурать-и ӳтĕнче?
Нуши-хуйхи, йăх-яхĕ, хĕнĕ-терчĕ
Сахал-и пулнă пурнăç тăршшĕнче?

Вунтăххăртах фашист камне вăл пĕлнĕ,
Вут-çулăмра ута-ута куллен,
Виç хут çунса, виç хут путса та «вилнĕ»,
Çапах та, курăр, пурăнать — пĕтмен!

Ҫăтарт-ха, теççĕ, çакса тух-ха, теççĕ,—
Сахал-и санăн орден та медаль?
Мăнтарăн кӳршисем... Çавна пĕлмеççĕ —
Мучин пуç каçăртса çӳрес-и халь?

Хӑй паттӑр пулнипе ун мухтанас-и?
Йӑхра та ун пекки вӗсен пулман.
Ялйыш телейӗ, ачапча хавасӗ
Темле наградӑран пин хут аван.

...Юрлать сунтал.
Юрри ытла илемлӗ.
Хӑй илтмелле юрлать мучи хуллен.
Анчах юрри — Тӑван ҫӗршыв илтмелӗх
Мӑнаҫлӑн, сарлакан янрать иккен.




ВСЕГДА ГОТОВ!

## ПИОНЕР

Пионер тесессĕн, ман ума
Харсăр чунлă çамрăк çын тухать,
Вăл пĕлет тĕллев патне утма,
Вăл çĕршыв пуласлăхне курать.

Уншăн вăл вут-çулăма кĕрет
Шеллемесĕр хăйĕн пурнăçне.
Пĕчĕкрен упрать вăл чĕрере
Вилĕмсĕр Ильичăн халалне.

Пионер тесессĕн, хам умра
Эп хастар Морозова курап,
Хăраман вăл ирсĕр тăшманран,
Вăл çаплах малта утса пырать.

Йĕпкĕн хĕрлĕ галстуксем çинче
Аттесем юхтарнă юн палли.
Шан, çĕршыв, хăруш самантсенче
Пирĕн ăс та, вăй та — сан валли.

Пионер тесессĕн, юнашар
Эп Гагарина туяп çумра,
Вăл вĕçет хăюллă та патвар,
Йĕнерлесшĕн çутă çăлтăра.

Ҫашниннех çунатлă чĕресем.
Çĕмрен пек çиçсе, пĕр çутă ир
Пирĕн те пуçланĕç вĕçевсем,
Ҫосмоса çĕкленĕпĕр эпир.

Пионер тесессĕн, ман ума
Тӳрĕ чунлă паттăр çын тухать,
Ывăнмасть вăл ырă ĕç тума,
Вăл ялан пуласлăха утать.

Пионер вăл миршĕн кĕрешет,
Ĕççынни телейлĕ пултăр тет.
Ун девизĕ: «Лайăх вĕренер!»—
Акă кам вăл чăн-чăн пионер.



## ПИОНЕРСЕН КУНĔ

Эй, горнсем, вăйлăрах!
Хытăрах, параппан!
Ытарми Çĕршывра
Уяв пысăк паян.

Май хĕвелĕ хитре.
Чаплă унăн тĕрри.
Çĕр çинче, пĕлĕтре —
Савăк пурнăç юрри.

Паттăр халăх утать
Коммунизм патне.
Чĕрере вăл упрать
Аслă Ленин ятне.

Пĕр йышра, пĕр ретре
Çамрăк гварди пырать.
Тăван парти пире
Анне пек юратать.

Эй, горнсем, вăйлăрах!
Хытăрах, параппан!
Ытарми Çĕршывра
Уяв пысăк паян!



## ХАВАСЛĂ ÇУ КУНĔСЕМ

Йăл-йăл кулса тухать июль хĕвелĕ,
Ир сывлăмĕ тăрна куç пек таса.
Сасартăк кĕмĕл горн сенкер тӳпеллĕ
Тавралăха янратрĕ сас парса.

Эй, тăр, вăран, хăюллă çамрăк халăх,
Курсам, çу кунĕ еплерех хитре!
Çӳçенчĕклĕн ыйха сирет хăвалăх:
Шăвать шыв çиййĕн кăпăшка тĕтре.

Тăри — тӳпе хуçи — пуçланă юрă
Ирхи тĕнче янравлăхне сavать.
Лĕп çил çинче пуçне тайса, шур хурăн
Пире каллех телейлĕ кун сунать.

Ку — пирĕн лагерь. Йĕркерен — палатка.
Хавасла пурăнатпăр вăрманта:
Пулла çӳретпĕр е çырла тататпăр,
Йышпа тухса каятпăр похода.

Шыва кĕретпĕр, ӳт-пĕве хĕртетпĕр,
Кашни кунах тухатпăр уй-хире,
Унта аслисемпе пĕрле ĕçлетпĕр —
Шăмшак та çирĕп, хул та туллирех.

Яра куна мĕн чухлĕ юрă-сăвă,
Мĕн чухлĕ вăйă-кулă каçсерен!
Çак ырлăхшăн, ытарайми Çĕршывăм,
Тавах сана чи ăшă чĕререн!



## ШКУЛА!

Шкула!
Шкула!—
Йӗс шӑнкравпа чӗнет
Сентябрь ирӗ.
Чи ҫамрӑк йыш
Тухать инҫе ҫула —
Пуласлӑх пирӗн.

Шкула!
Шкула!
Портфель йӑтса,
Кулкаласа утатӑн.
Аҫу-аннӳ
Чӳречерен пӑхать —
Эс пысӑклантӑн.

Шкула!
Шкула!
Ман сарлака
Куҫ виҫейми Ҫӗршывӑн
Сана валли
Сӑмахӗ ак ҫапла:
Пул ӑслӑ, сывӑ.

Шкула!
Шкула!
Пултарасса,
Парӑнмасса пӗлетпӗр.
Пӗрремӗш утӑмна
Патвар пуҫла,
Пул Ленин евӗр.



## ВĂЛ ЯЛАН ПИРĔНПЕ

Хăюллă та çивĕч Гайдар
Ута йĕнерленĕ ним мар.
Вутран хăрамасăр,
Вунулттăри паттăр
Полка ертсе пынă хастар.

Ача вăййи мар вăрçăра,
Гайдар ялан тытнă асра:
«Мĕнпур ĕççынnишĕн,
Ваттишĕн-вĕттишĕн
Телей килсе çиттĕр часрах!»

Хаяр тăшмана çĕнтерсен,
Самант та канма вăл пĕлмен.
Çап-çутă гӳпеллĕ,
Илемлĕ, хĕвеллĕ
Тĕнче тăтăр тенĕ куллен.

Ак, унăн сăнне эсĕ кур:
Кусран хăй пăхать пек Тимур.
Унра Кибальчишăн,
Маттур Кибальчишăн
Çунатлă сăнарĕ те пӳр.

Халь-халь ыткăнас пек мала,
Тăшман хăраса тармалла,
Пире туйăнать вăл,

Пире йыхӑрать вӑл,
Шанать: ҫӗнтерӳ пулмаллах.

Эпир, Тимурсем, пинӗпе,
Эпир, маттурсем, пинӗпе,
Тус-йышлӑн, тӑванлӑн,
Ялан алла-аллӑн
Утатпӑр Гайдар ҫулӗпе.



## ПИРӖН ЛАГЕРЬ

Кун пуҫланчӗ тӳлеккӗн, хаваслӑн,
Салютпа саламлатпӑр ире.
Горн йыхравӗ чӗнет кӗмӗл саслӑн
Пӗр ҫӗре пухӑнмашкӑн пире.

Пионер, эс Ҫӗршывӑн илемӗ,
Вӑл пиллет ҫут пуласлӑх сана.
Ӗмӗр-ӗмӗр Октябрь хӗлхемӗ
Ҫутатса тӑрӗ санӑн ҫулна.

Ҫӗнӗ кун пуҫлама пурте хатӗр,
Рапорт пар та — ӗҫе эс пикен.
Ҫанура та ӗҫре пирӗн лагерь
Хӑй чысне нихӑҫан ӳкермен.

Ҫашниех пултӑр ҫирӗп вӑй-халлӑ,
Вӑйлатар пионер туслӑхне,
Савӑнса, ӗненсе пӑхтӑр халӑх
Илӗртӳллӗ малашлӑх ҫине.



## ÇУРКУННЕ

Тавралăх кĕрлесе вăраннă майăн
Ķаллех хаваслă пурнăç пуçлама
Вĕçсе килет карти-карти хуркайăк
Çурхи ытарайми çĕршывăма.

Малти — кая! Ķайри — мала!
Ķилсемĕр!
Итлетĕр хӳхĕм юррăра тĕнче.
...Паян ирпе, туссем, пуçланчĕ тепĕр
Вĕр-çĕнĕ çаврăм пурнăç тăршшĕнче.

## ЭХ, ИЛЕМЛĔ-ÇКЕ ТĔНЧЕ!

Тру-ту-ту!
Тру-ту-ту!
Çывăрса ан юл, асту!—
Горн йыхравĕ пĕр çĕре
Пухрĕ пирĕн лагере.

Тăрăшса вĕреннĕ хыççăн
Ķашниех канма хавас,
Атăл çилĕ уççăн-уççăн
Улăха çитет кас-кас.

Пĕлĕтсĕр сенкер тӳпе
Галстук çыхнă ача пек,
Ķурăр хĕрлĕ хĕвеле —
Сапалать мерчен-шевле.

Савăнса, хĕпĕртесе
Ҫилнĕ тейĕн çав паян
Тĕрлĕ халăх ачисем
Ҫурçĕртен те кăнтăртан.

Чăвашпа тахçан тăванлă
Вырăс, çармăс та тутар
Пĕр тĕллевлĕн, алла-аллăн
Шав утаççĕ юнашар.

Ҫилнĕ лагерь уявне
Мăкшăсем те пушкăртсем,
Пытармаççĕ хавасне
Туслă Венгри ачисем.

Аслă Атăл, хӳхĕм Атăл
Ал çупса кăна тăрать,
Туссене вăл питĕ хапăл,
Туссене вăл тарават.

Асамат кĕперĕ пек
Пирĕн юрă — ун çинче
Саланать çĕршывĕпех,
Ян каять инçе-инçе.

Эх, илемлĕ-çке тĕнче!
Хамăр та хитре эпир.
Яланах çак çĕр çинче
Пултăр туслăх, çирĕп мир!





## КИЛЕХ, ÇĔНĔ ÇУЛ!

Килех кĕрлесе, Çĕнĕ çул!
Кил, шанчăк,
Кил, ĕмĕт, çунатлăн,
Кил çирĕп вăй-халлă, хăватлă,—
Хăни те, хуçи те эс пул.

Хăвпа пĕрле ил çут хĕвел —
Тӳпе асаматлăн ялтратăр.
Симфони пек чаплăн янратăр
Юрру, кĕтĕр аслă кĕвве.

Килех çуталса, Çĕнĕ çул!
Кил, ырă та ĕçлĕ çулталăк,
Пилле эс чунтан савăнмалăх
Сар ылтăн пучахлă тырпул.

Телей эс пилле çынсене.
Тек вăрçă ниçта та ан астăр,
Тăванлăх юрри çунат сартăр,
Ян! кайтăр мĕнпур тĕнчене.

Килех йăл кулса, Çĕнĕ çул!
Сана кĕтсе, алăк уçатпăр,
Чунтан-чĕререн саламлатпăр:
Чĕр пурнăç çăлкуçĕ пек пул.

Эс ут кунсерен малалла,
Пул чыслă, мухтавлă, йыхравлă.
Курсам, çутă ĕмĕтлĕ халăх
Тухать çĕнтерӳллĕ çула!



## ВАСКАТĂП ШУРĂ ВĂРМАНА

Эх, йĕлтĕр!
Ҫалăн, ҫилҫунат
Вут-хĕм сапса
Вĕҫет, чупать.

Ыткăнтарать халь
Вăл мана
Шур кĕрĕк уртнă
Вăрмана.

Ши! шăхăрчĕ.
Ку кам-ши? Чим?
Васкать ман хыҫҫăн
Ҫил ачи.

Ҫук, ҫук,
Ан чар эс йĕлтĕрҫе,
Васкатăп эп ирех ĕҫе.
Ирех ĕҫе.

Ху ҫулупах
Чупса эс кай,
Шур вăрманта
Ман тус нумай.

Ав, кур-ха
Манăн юлташа,—
Апат кĕтсе
Ларать пакша.

Эс, çил ачи,
Усаллансан,
Мĕн курĕ
Пăчăр та ăсан?

Çак сиплĕ
Ҫантăр вăррине
Йăлтах эп парăп
Вĕсене.

Сахал-и
Хĕнĕ те нуши
Хĕл сиввинче
Хитре пăшин?

Çулла эп
Ал усса ларман,
Куран пуль —
Утă пĕр капан.

Ан шăхăр, çил,
Ан кĕр чĕрре,
Эс хăратаймăн
Халь пире.

...Хавас
Хĕл тутă пулнăран
Шур вăрманти
Тус-йышăм ман.



## АСЛĂ НИМЕ

Çак кун — пуласлăхăн пĕр кунĕ —
Хитрен пуçланнăн туйăнать.
...Малтан сана хĕвел ыр сунĕ,
Ĕçе пуçтарăннă çынна.

Тапранĕ музыка хăватлăн
Урамсенче те ăшунта.
Эс утăн çăмăллăн, васкавлăн
Чун тунсăхланă завода.

Эс канмалли куна пăхмасăр,
Чун еккипе, чун ыйтнипе,
Хĕрсе кайса, маттуррăн, харсăр,
Вут-хĕм кăларăн туссемпе.

Станок çинчен кашни деталĕ
Йăлтăртатса тухмассерен
Сан кăмăлу пушшех çуталĕ
Укçасăр тунă çак ĕçрен.

Çак тĕнчере мир пултăр тетпĕр,
Ан астăр тетпĕр сăх тăшман.
Уçланкăра чечек ешертĕр,
Кашлатăр тетпĕр сад-вăрман.

...Çак кун — пуласлăхăн пĕр кунĕ—
Хитрен пуçланнăн туйăнать.
Этемĕн хăйĕн чун саккунĕ,
Паян унпа вăл пурăнать.

Чун çутипе кӗрлет мӑнаçлӑн
Çак аслӑ, çуламлӑ ниме.
Асилтерет пек Çӗр асамлӑн
Ман çамрӑкланнӑ аннеме.

Каçхи хуламӑр хитреленнӗ,
Тӗп площадь çутӑ та таса.
Çакна курса, аттемӗр Ленин
Тӑрать пире саламласа.

## МАЙ САВВИ

Эй, çак çурхи уявӑн хӗмӗ-вучӗ!
Утать хӗп-хӗрлӗ Май, ем-ешӗл Май,
Кисрентерсе кӗрлет те ун салючӗ,
Чечек айне пулать Çӗр çавна май.

Эй, çак çурхи уяв уттин хӑвачӗ!
Пур ӗçлӗ халӑх, харӑссӑн пусса,
Утать те çӗнтерӳллӗн — мир парачӗ
Пырать планета тӑрӑх сарӑлса.

Эй, çак çурхи уявӑн çут йыхравӗ —
Мал ӗмӗт, шанчӑк, туслӑх та телей!
Уй-хирсенче янрать вӗри ӗç шавӗ,
Сухаçӑ кусӗнче вылять шевле.

Эй, çак çурхи уявӑн аслӑ вӑйӗ —
Вӑрçа сивлетпӗр! Пултӑр çирӗп мир!
Çунат парать пире этемлӗх Майӗ,
Ӗççыннисем — Çӗр хуçисем эпир.





# КАЙКĂР

*Поэма*

## 1. ЧУЛ ТУ

Эй, пěчěк çын!
Сан пур-и хăвату?
Вăй-хал кăшт сисěнет-и хулунта?
Ачалăхра кашни тупать чулгу,
Хăйне тěрěслеме каять унта.

Мăнаçлă, ирěк Атăл хěрринче
Пур ватă, чăнкă-чăнкă пěр çыран.
Карттус ўкет, атьсемěр, пуç çинчен,
Ун тăррине курас тесе пăхсан.

Чи хăюлли кăна çав ту çине
Тарла-тарла пултарě хăпарма.
Çут хěвеле, Хуркайăк картине
Чěнет пек çўллě ту ларса канма.

Аслатисем илешнě çав тăва
Парăнтарсан, ун тăррине çитсен,
Йăлт урăхла эс курăн Çěршыва.
Ун вěçě те, хěрри те çук иккен!

...Чул ту çинче — пěр кěререх ача.
Хашкать кăштах. Ўт-тирě йěп-йěпе.
Ěшеннине хăй палăртмасть пачах.
Вăл калаçать çěрпе те пěлěтпе.

Ун çумěпе вěçеççě кăйкăрсем.
Хěвел юнашарах пек туйăнать.
Йěри-тавра — ытарайми илем.
Пин тěрлě тěс куçа йăмăхтарать.

Пин тěрлě тěс пин шухăш çуратать.
Эй, пысăк Çěр! Сан тупсăму ăçта?
Ăçтан çак аслă Атăл пуçланать?
Мěн-ма çунать-ха çăлтăр çěр хута?

Эй, вĕçсĕр çутçанталăк! Ăнлантар,
Тен, аслати те çакăнтах çӳрет?
Ача-пăча чĕри хăравçă мар,
Аслатирен çапах та шикленет.

Эй, кăйкăрсем! Парнелĕр-ха çунат,
Тăван çĕре çӳлерехрен курам!—
Ик куçĕ ун ик кăвар пек çунать,
Ача чухне вĕçме шутламĕ кам?

Çапать, çапать хăватлă çил питрен.
Çил тустарать ача çӳçне-пуçне.
Ача пулин те — вăйсăр мар иккен,
Хал çитнĕ улăхмашкăн ту çине.

Пайтах кăтартĕ пурнăç малашне
Хĕнне-тертне —
Ав, аякра паян
Фашист урсах таптать Мадрид çĕрне.
Пул тӳсĕмлĕ,
Ан парăн, Андриян.

## 2. ВУТПА ЧЕЧЕК

Çавăрттарать тăман,
Çил шăхăрса вĕрет.
Вăй-хал хавшанăран
Ҫанма ларас килет.

Анчах ăçта канас?
Сĕнтĕрвăрри хыçра,
Яла çитеймĕн час —
Вунпилĕк çухрăмра.

Чĕре сури тума
Çитмерĕ çĕрулми.
Умра — çиллес тăман
Пăхса та курăнми.

Чăт, Андриян, чăтах,
Унта, ав, анăçра,

Чылай йывăртарах —
Тăшман виç çул урать.

Хаяр вăрçа пула
Аслисемпе пĕр тан
Сан авăн çапмалла,
Сан хывмалла капан.

Сан утă çулмалла —
Çитмест арçын алли.
Сан выльăх пăхмалла —
Аш кирлĕ фронт валли.

Вунвиççĕри ачан,
Сан вĕренес пулать.
Вĕреннĕ çын анчах
Хăй вăйлине туять.

Ах, çăмăл мар сана,
Чĕрӳ епле чăтать?
Килте, ав, аçуна
Пит йывăр чир кăшлать.

Ылханлă вăрçăран
Куллен — хура хыпар,
Çав фашиста хăçан
Тĕп тăвĕ Хĕрлĕ Çар?

...Урать, урать тăман,
Урать каçса кайса.
Утать-ха Андриян,
Мĕнпур вăйне пухса.

Йăлт кайнăччĕ халтан.
Сасартăк — çын умра.
Иван-çке ку, Иван!
Пиччеçĕм, мĕн, ара?

— Сана кĕте-кĕте
Шалт ывăнтăм, Энтри,

Аттен унта, килте...
Текех тапмасть чĕри...

Çапла вĕçленчĕç сан
Ачалăх кунĕсем.
Ан парăн, Андриян.
Чунна хытар. Тӳссем.

...Эс Çĕнтерӳ кунне
Манаймăн нихăçан.
Хитреччĕ çуркунне,
Ем-ешĕлччĕ вăрман.

Пуçтартăн тăрăшса
Эс çеçпĕл чечекне.
Каларăн савăнса:
— Çĕнтертĕмĕр, анне!

### 3. «ÇЫН ПУЛ»

Кӳршĕре Карачăм пурăнать,
Ватăскер, пит киввĕн курăнать.
Темшĕн хутшăнмасть хăй çынсемпе,
Калаççан калаçĕ — йыттипе.

Пĕринче тем пулчĕ чĕмсĕре,
Чарчĕ те — калать чĕтре-чĕтре:
— Эс те ман пекех çав, Андриян,
Тĕнчере ыр çын гĕлне пулман.

Ахальтен йăваш-и эс ытла?
Е ятла мана, е ан ятла —
Çук никам та ырă сунакан...
Араскал килет пĕр хăвăнтан.

— Ав епле?! Çук, тĕрĕс мар, мучи.
Тĕрĕс мар! Ак эп, чăваш ачи,
Техникум пĕтертĕм хулара,
Ырă çын пит йышлăччĕ вара.

Ырă çын кăвак Карелире
Пит нумайччĕ. Халĕ ак пире
Пĕрлештерчĕ, ырă çынсене,
Совет Çарĕ туслă çемьене.

Тăлăх мар тĕнче ыр çынсенчен,
Ырă тус-юлташ тупас тесен,
Эп, мучи, шутлатăп ак çапла:
Çыннăн хăйĕн çынлăх пулмалла!

## 4 ТӲПЕ ЧĔНЕТ

Вĕçме çуратнă пулĕ-çке шăпа.
Кĕтмен-туманччĕ — авиаци чаçĕ.
Военкомат кăтартнă маршрутпа
Призывниксем Совет Çарне каяççĕ.

Кам тĕлĕкре çӳле вĕçсе курман,
Кам ача чух çунат тупас темен-ши?
Хитреччĕ Андрияншăн сĕм вăрман,
Анчах чуна тӳпе туртатчĕ темшĕн.

Мĕн пулнă-ши унта, çӳл тӳпере?
Каланă Иванов, чăваш поэчĕ:
«Çук этемрен вăйли çак тĕнчере!»—
Çав шухăша ун тĕрĕслес килетчĕ.

Стрелок пулса, чылай вĕçсе курсан,
Иккĕленмесĕр, татăклăн, хăюллăн:
«Пулатăп летчик!»— терĕ Андриян,
Пуçларĕ вĕренме хавхалануллăн.

Вĕçев!
Малти кабина. Пĕр-пĕччен.
Паян вут-кайăк мар-и вăл —
Çунатлă!
Ытарайми илемлĕ çут тĕнче,
Хăй ывăлне курса,
Çупать пек алă.

## 5. ПАРНЕ

Ҫӗмрен пек, шӑхӑрса, ҫӳлелле,
Самантрах хӗвеле ҫитесле,
Шур тӗк евӗр, пачах палӑрми
Ыткӑнать реактивлӑ МИГ.

Эх, паха! Мирлӗ ҫӗр — аялта.
Сумлӑ-ҫӑкӑрлӑ пурнӑҫ унта,
Пин шӑпа, пин телей, пин сас —
«Ҫӗрӗм-шывӑм, эп саншӑн хавас!»

Пӗр хут мар тӳпере Андриян,
Хӑраса-аптраса тӑман.
Чӑн-чӑн сывлӑш хуҫи вӑл.
Анчах...
Чим, мӗн пулчӗ МИГа тӑруках?

Сӳнчӗ двигатель. Вил—хускалмасть.
Газ парсан та, ҫынна пӑхӑнмасть.
Самолет ҫухатать ҫӳллӗшне,
Хӑрушла ҫывхарать Ҫӗр енне.

Ҫӗр ҫинчен, ав, хушаҫҫӗ: «Сик!»
«Эпӗ сикӗп. Анчах та — МИГ?
Ман мӗнле уйрӑлас унпа,
Тӳпери тахҫанхи туспа?»

«Сик!»— хушаҫҫӗ каллех лерен.
«Ҫук, лартатӑп МИГа хире!»
«Эс — пилот. Лӑпкӑ пул чи малтан,
Вара тухӑпӑр йывӑрлӑхран...

Ак вӑл — ҫӑлӑнӑҫ ҫулӗ — кур,
Ҫӗр ҫинче тӑрӑхла лаптӑк пур.
Ҫавӑнта ман анса ларас.
Мӗн тӑвас-ха — ҫӗре сухалас...»

Самолет анса ларчӗ «ҫемҫен».
Умӗнчех — тип ҫырма иккен.

Тепе́р чух ик-виç утăм кăна
Вилĕмрен хăтарать çынна.

Çав самант паян кун та асра:
Строй умне кăларса паттăра,
Командир пилота парнелет
Ятне çырнă хитре сехет.

## 6. МУСКАВА

Хăвăртрах вĕçмелле,
Çӳлерех вĕçмелле!
Тĕпсĕр вар урлă сик,
Ишсе каç тинĕс урлă —
Вĕçекен кашни çыннăн
Çунатлă тĕллев,
Тĕллеве куракан
Хисепĕ те сумлă.

Тĕк тăмасть самана,
Шавласа, кĕрлесе,
Малаллах ыткăнать
Пирĕн çирĕммĕш ĕмĕр.
Çĕршывра сахал мар
Çивĕч ăслă çынсем:
Авă, спутник вĕçет —
Ĕнтĕ курăр та пĕлĕр!
«Ĕмĕртен туртакан
Çăлтăр çулĕ çине
Тухса куртăр этем,
Космоса тухса куртăр!»—
Çак шутпа хĕмленсе,
Паттăр летчиксене
Мускава пуçтарать
Королев — Тĕп конструктор.

Çав историллĕ кун
Халĕ уйрăм шутра.
Акă тухтăр калать:
«Пур енчен те пит лайăх!»


СССР

Ёненес-и е çук-и:
Пĕрремĕш отряд!
Чи пĕрремĕш —
Гагарин, Титов, Николаев...

### 7. АНСАТ-И КОСМОНАВТ ПУЛМА?

Ансат-и космонавт пулма?
Ак, центрифуга — чăн-чăн тамăк,
Е çӳлелле тăвать те тайлăк,
Е аяла каллех чăмать.

Кĕр барокамера ăшне —
Сана хĕссе лартать те сывлăш,
Ай тур-турах, аннеçĕм, пулăш!—
Анчах çумра лармасть анне.

Çав сурдокамера текен
Читлĕхĕнче эс ларса тух та
Ас-пуçлă пул — калатăр тухтăр:
«Эс сывлăхлă çынах иккен».

Ансат-и космонавт пулма?
Тĕпче, вĕрен татти-сыпписĕр,
Спортпа туслаш.
Шăмшак хевтисĕр
Каяймăн çăлтăрсем курма.

Çак кăткăс тĕрĕслӳ кăна
Çӳле вĕçмешкĕн ирĕк парĕ,
Пуçри ăс-хакăл та чун тарĕ
Кăларĕç уçлăха сана.

### 8. ХИТРЕ-ÇКЕ ÇĔР!

Шавлать, юрлать Çĕршыв. Кĕрлет тĕнче.
Савăнăçне кам пытарма пултарĕ?—
Кăвак тӳпен инçе уçлăхĕнче
Пĕрремĕш хут — совет çынни Гагарин!

Эпир — çунатлă ĕмĕр çыннисем.
Пире çав ĕмĕре пилленĕ Ленин.
Çутта шанса, вăя виçсе-пĕлсе,
Совет çынни çав çӳллĕше çĕкленнĕ.

Вĕçет Гагарин тĕпсĕр тӳпере,
Вĕçет мир йыхравçи планета çийĕн:
Хитре-çке Çĕр, ытарайми хитре!
Мĕнпур вăйран ăна упрасчĕ пирĕн!

...Вĕçет Титов. Старт умĕн дублерне —
Андрияна куçран каларĕ Герман:
«Сан хăвăн та çак çăлтăр сехетне
Кĕтсе илес самант вăрах кĕттермĕ».

Вăл çитрĕ, çав самант.
                    Байконурта
Вăранчĕ август ирĕ çуг хĕвеллĕ.
Ракета — йăлтăрти титан-çурта —
Тăратчĕ куç илме май çук илемлĕ.
Вăл çĕмрен пек тапранчĕ вырăнтан,
Çĕре кисрентерсе, хитрен тапранчĕ.
«Тавах шаннишĕн,— терĕ Андриян,—
Тавах, Çĕршыв, тавах, юратнă парти!»

...Шăп талăк иртрĕ. Иккĕн — уçлăхра!
Чи çывăх тус — Попович, кӳршĕрех вăл!
Мĕн пултăр-ха хакли тăванлăхран?
— Салам!— тет Андриян.
                    — Будьмо!— тет Павел.

Пĕрле çӳренĕ Остерта тахçан
Ик тус, ик пĕлĕш—Пакрышень те Çеçпĕл.
Паян, пĕрне-пĕри курса, тĕлме-тĕл
Вĕçет планета çийĕн ик тăван.

Хитре-çке Çĕр!
                    Илемлĕ Украина,
Чăваш çĕршывĕн тумĕ те хитре.
Мал ĕмĕтлĕ, хастарлă ирĕк çыннăн
Ĕçчен алли илем кӳрет çĕре.

Ик коммунист, çунатлă икĕ кăйкăр,
Совет çĕршывĕн сулăмлă чапне
Нихçан пулман шая çĕклеççĕ, курăр,
Сиксе вылян çут çăлтăр çӳллĕшне.

## 9. ЁНЕН ПИРЕ

Хуркайăк карти пек,
Ылмашăнса,
Космонавтсем
Орбитăна тухаççĕ.
Канма тесе каймаççĕ
Космоса —
Унта тĕнче вăрттăнлăхне
Шыраççĕ.

Ай, çăмăл мар,
Тап-такăр мар çав çул,
Çапах та ĕмĕт
Яланах çунатлă,
Хăюллă пул,
Пĕр шиксĕр, чăрсăр пул,
Чи хăюллин кăна
Чĕри хăватлă.

Пăхатăп эпĕ
Андриян çине.
Вăл ик хутчен
Сĕм уçлăха хăпарнă.
Вăл курнă çывăхран
Çăлтăрсене,
Вăл аякран
Çĕр-аннене сăнанă.

Çĕршывăн паттăр,
Харсăр ывăлне
Калатăп эп,
Сума суса, хисеплĕн:

«Пире эс чĕнтĕн
Çӳллĕ тӳпене,

Чун çунатне сарма
Пире вĕрентрĕн.

Эс, ĕмĕт-тĕллевне
Курса-пĕлсе,
Ана парăнтарма
Пултарнă кăйкăр,
Ĕнен пире:
Вăй-халлă чăвашсем
Завод лартаççĕ,
Ӳстереççĕ çăкăр.

Пӳлеççĕ Атăла
Хăюллисем,
Ун хăватне
Этемлĕхшĕн кӳлеççĕ.
Эс кур пире —
Шансам та ĕненсем:
Кашни чăваш çынни паян —
Вĕçевçĕ!



# ÇĂКĂР

*Поэма*

«Çăкăртан асли çук».
*Ваттисен сăмахĕ*

## I

Ват Украина çĕрĕпе
Утать асаплăн, тертлĕн Çеçпĕл.
Вăй-хал килте лармалăх çеç те —
Утать вăл чун хавалĕпе.

Мĕн сывлăх?—
Халăх сыв пулсан.
Асап мĕн?—
Халăх терт ан куртăр.
Тăван чĕлхемĕр сывă юлтăр,
Ан пĕттĕр халăх выçлăхран.

Лерен, мăн Атăл хĕрринчен,
Чуна касать пин саслă:
«Çăкăр!
Туссемĕр, пулăшсамăр, çăлăр,
Туссем, хăтарăр инкекрен!»

Чуна йĕп пек тирен йыхравăн,
Ах, йўçĕ те хаяр сасси.
Эс, Çеçпĕл, чирпеле ан авăн,
Сан тивĕçў халь — çăласси!

Ан тив, асапĕ те элекĕ
Йăлт килчĕç çăкăршăн анчах,—
Малтан улпучĕпе тиекĕ
Сĕнмерĕç чĕлĕ те пачах.

Ķайран, тарпа юн каснă çăкăр
Хакне пĕлме вăхăт çитсен,
Чăваш телейĕ йăлтăр-йăлтăр
Хĕвел шевлиллĕн йăл илсен,



Хӑравҫӑ йӗксӗкӗн тӑхланӗ
Пырса тивертнӗн ҫурӑмран
Сана сасартӑк чир тӑллана.
...Йӑлт килчӗ пулӗ ҫӑкӑртан.

Вуншар тулли лав хыҫӗнче
Утать вилес пек чирлӗ Ҫеҫпӗл.
Хӗвел сапан тырри ҫитес тӗл —
Тӑван Чӑваш ҫӗршывӗнче.

Ҫук, ҫук! Хӑвна эс пӗтермен.
Чи юлашки самант вӑй-халлӑ
Эс пӑхнӑ вилӗм куҫӗнчен.
Вара каланӑ:
«Эп е — халӑх».

## II

Юн каснӑ ҫӑкӑр, тарлӑ ҫӑкӑр
Шӑпи ҫинчен шутланӑ чух
Нихҫан та хам аттен пӗр йывӑр
Асилӗвне эп манас ҫук.

Вӑл — Волхов фрончӗн рядовойӗ.
Вӑл — снайпер — фрицшӑн сехремет.
Ҫӗре йӑваннӑ... Чакнӑ вӑйӗ,
Вӑл сиснӗ: кун пӗтсе килет.

Лӑпланнӑ ҫапӑҫу. Уй тӑрӑх
Йӳҫ тӗтӗм шунӑ явӑнса,
Ҫӗр курӑннӑ ытла та тӑлӑх —
Ҫӗршер ҫын юлнӑ тӑкӑнса.

Аттен ыратӑвӗ, ылханӗ
Аша капланнӑ самантра
Тискер вӑрӑ-хурах ҫӑханӑн
Пӗр ҫын тем хӗвӗшнӗ уйра.

Тара ӳксе тӑрмашнӑ сӑвӑр —
Е сутӑнчӑк, е дезертир:
«Вилни чӗнмест. Пухас-ха ҫӑкӑр».
Пӗр шухӑш пулнӑ ун ҫак ир.

Тӑван ҫӗршыв ятне ямасӑр
Хӑюллӑ ҫапӑҫнӑ аттен
Вилес килмен хӑватсӑр-халсӑр.
Ун ҫӗр ҫине йӑваниччен

Пӗр тивӗҫ юлнӑ. Хӑй валли
Хӑварнӑ пульӑпа вӑл меллӗн
Тӗп тунӑ ирсӗре тирпейлӗн.
Унтан тин ҫӑннӑ алли.

...Шӑпа-и? Халӗ шутлӑр хӑвӑр.
Пурнать атте. Тав кунҫулне —
Вӗр-ҫӗнӗ кӑпӑшка шур ҫӑкӑр
Илем кӳрет ун сӗтелне.

Ҫук, шӑпа мар! Юлташӑм, эс пӗл,
Чуралӑхпа телей ҫинчен
Астутарса, хӑй ларнӑ Ҫеҫпӗл
Аттен вӗри чун-чӗринче.

## III

Ҫынна хӑват пилленӗн ӗмӗт
Вӑл килнӗ, ҫӑкӑр. Пӗрчӗрен
Пин-пин пулса, чӗр пурнӑҫ хӗмӗ
Сапса тӑмашкӑн кунсерен.

Куҫпа курми пӗр пӗчӗк атом
Вӑйне чухлатпӑр халь эпир,
Вӑл, ҫӑкӑр, атомран та паттӑр,
Вӑл хӑй — пӗртен-пӗр пӑхаттир.

Апла пулсан, пӗр вӗҫсӗр улӑп
Ҫак ҫӗр ҫинче ҫуралмалла.
Ӗҫ-хӗл, телей те савӑк кулӑ
Ҫак тӗнчене янратмалла.

Анчах... пĕрре иксе тухать те
Е Гитлер, е Наполеон —
Выртса юлать çап-çамрăк халлĕн
Шăп та лăп çирĕм миллион.

Эй, çăкăр! Ирĕклĕх кăварĕ!
Пĕр саншăн лăпкă мар тĕнче —
Вăйпиттĕнех ўкет Гевара
Инçе Боливи çĕрĕнче.

Е Чилие аса илен те,
Чунра — пăлхавлă тарăху.
Ытла ир пĕтрĕн эс, Альенде,
Кĕтетчĕ çăкăр халăху.

Ах, çăкăр, çăкăр! Сумлă çăкăр!
Санра эп вăрçă сăлтавне
Курасшăн марччĕ те, çĕр çăттăр
Санпа вылян мул хуçине.

Санра мĕнпур пуянлăх уншăн:
Эрехĕ, ылтăнĕ, майри...
Ытла та çак тĕнче хăрушă
Чĕнми ларсан. Туятăр-и?

Анчах та çирĕм миллион,
Анчах Альендепе Гевара,
Çунса кайса вĕри кăваррăн:
«Ак,— терĕç,— пирĕн Рубикон:

Кам çăкăра чура тăвасшăн,
Кам мул шутне хурать ăна,
Çав кайтăр малалла, тархасшăн,
Анчах... эпир вилсен кăна».

Куратăп, ку вăл — Çеçпĕл чунĕ
Мĕльюнсенче сиксе вĕрет.
Апла-тăк, Çĕн акан Çĕн кунĕ
Сўнмесĕр тăрĕ ĕмĕрех!

## IV

Тин пиçнĕ çăкăр — чун уççи вăл.
Ун ячĕ пит хитре янрать.
Анчах... эрни-эрни ан çывăр,
Çулталăка ерçӳ çухат.

Чи аслă юрату арманĕ
Сан чĕрӳне пăлхатмалла.
Юлташ, çак ырлăхра манман-и
Эс çитмĕл иккĕмĕш çула?

...Яла çитес тесе васкаттăм,
Çухалчĕ савăнăçăм ман:
Хуралнă, типнĕ, куштăрканă
Хĕвел пушарĕпе вăрман.

Пĕр-ик эрне шыв-шур курмасăр
Пушхирпеле çын утнăнах
Тĕл-тĕл вуçех шàркаланмасăр
Салхуллăн усăннă пучах.

Вут чĕлхи пек — пырса ан çулăх,
Аçта ан пăх — вĕри ăрша.
Çĕр сĕткенне ĕмет çав «çулăм»,
Ĕмет непсесĕр, апăрша.

Қалаçура пĕр тема — шăрăх,
Аçта-ши çумăр, иçмасса!
Ана нимпе пулăшасса
Пĕлмесĕр утрăм эп ял тăрăх.

Қайран тин куртăм. Пулчĕ кăлăх
Пăшăрханни те кулянни.
Çак нушара пулмарĕ тăлăх
Ĕçчен те харсăр ял çынни.

Хăватлă та пуян патшалăх
Пиллерĕ хăйĕн «çумăрне»,
Парне сĕнет рабочи халăх —
Цистернăсен эшелонне.

Çĕр çыврмасть ялти яш-кĕрĕм,
Хăй тивĕçне туять чунпа.
Çĕре сиплет вăл. каçăн-ирĕн
Комсомолла хастарлăхпа.

...Кайран, колхоз пуссийĕ чăшăл
Сасартăк çĕкленсе кайсан,
Кайран, йĕтем çинчи сар кăшăл
Тем анлăш выртнине курсан,

Анлантăм эп — утма тивмерĕ
Лав хыççăн Çеçпĕл пек куллен.
Чи çирĕп туслăхăн кĕперĕ
Пире хăтарчĕ инкекрен.

Анлантăм эп — çĕнтерчĕ халăх
Гăванлă-йышлă ушкăнпа,
Темле йывăрлăхран тухмалăх
Хăвачĕ пур ун çавăнпа.

Кулач тытса тулли çĕклемĕн
Хресчен тав гăвĕ ĕмĕрне
«Çĕр — халăха!» текен пĕрремĕш
Мухтавлă Ленин декретне.

## V

Сĕтел çинче — чăлт-шурă çăкăр.
Ана пĕр чĕлĕ касиччен
Хирург пек тĕплĕн алă çăвăр:
Чăваш йăли ку ĕмĕртен.

Турри, шуйттанĕ... Вăл йăвашшăн
Хăват ширанă хăй валли.
Анчах та Çăкăр! Çук, чăвашшăн
Никам пулман унран асли.

Киремете, аш-пăш е çăкăр
Пухса, ялпа пуççапнă чух
Тĕпренчĕке чăваш, астăвăр,
Тăкса, персе хăварас çук.



Питшăллипе витсе тирпейлĕн
Чăваш упранă çăкăра.
Вăл пур-тăк, пулнă ун хĕвелĕ,
Вăл çук-тăк, çуннă тамăкра.

Ура çине тăрса хăватлăн,
Пулмарĕ халăх хĕн хурри.
Çав çăкăртан çĕр пин сăмах ун,
Çĕр пин эрешĕ те юрри.

Пĕрре ман тивĕçĕм — шыратăп
Çĕр пин пĕрремĕш сăмаха.
Вăл—ман сăмах—вутра, шывра та
Мала çеç чĕнтĕр халăха.

Çав сăмаха илтсе, хавассăн
Шупашкарти пĕр сталевар
Рекорд тумашкăн шут тытсассăн,
Мана тек ним те кирлĕ мар.

Çав сăмахпа уй-хир ĕçченĕ
Хавхаланать пулсан куллен,
Юратнă халăхăм, ĕненĕн:
Эп çăкăра ахаль çĕртмен.

Хĕç евĕр çивĕч ман сăмахăм
Тирсен тăшманăн чĕрине,
Çак çĕр çинчен хĕн-хур çĕтмахĕ
Кайсассăн хăйĕн çăвине;

Тĕнче тасалăхĕ, тирпейĕ
Чуна лăпканă самантрах
Ак тупăнчĕ, туссем, вăл тейĕп,—
Çĕр пин пĕрремĕш çав сăмах.

Хастаррăн утăп, ывăнмасăр,
(Юрать-и Çеçпĕлтен юлма!)
Ĕçчен калать пулсан пăхмасăр
Чунпа шăратнă сăввăма!

## VI

«Мир!» тенӗ пек янрать вӑл, ҫӑкӑр,
Тӑван Чӑвашӑн кунҫулне
Аса илетӗп те, ҫут ҫӑлтӑр
Карти тухать ак куҫ умне.

Ҫӑлтӑрсемпе вунсакӑр талӑк
Калаҫнӑ паттӑр Андриян
Тӑван ялне килет те, халӑх
Тухать ватти-вӗтти таран.

«Мӗнле-ха сывлӑху сан, кӑйкӑр?»
Ыйтса пӗлмешкӗн пуҫличчен
Ялйыш сӗнет тав тунӑн ҫӑкӑр
Хӑй ывӑлне чун-чӗререн.

Вӑл, космонавт, илет сӑпайлӑн
Хресчен пӗҫернӗ ҫӑкӑра.
Вӑл астивет ӑна. Асамлӑ
Хӑват ҫунмасть-и халь унра!

Каллех вӑл космоса ҫӗкленӗ,
Ун йӗрӗ сӳнмӗ пӗлӗтре.
Ҫав ҫутӑ йӗр, туссем, ӗненӗр,
Пӑхсассӑн туйӑнӗ пире

Ахах-мерчен пучах шевлиллӗн
Вӑл, хӗвеле савса, куллен
Шав ҫӗкленет, шӑтса вӑй илнӗ
Хӑватлӑ Ҫеҫпӗл Тырринчен.



## ТУПМАЛЛИ


| | |
|---|---|
| Ярапаллă йăмра | 3 |
| Аннемĕр | — |
| Тымар сĕткенĕ | 4 |
| Пĕлетĕп | 5 |
| Эх, пура пурасчĕ ман | 7 |
| Сăпка юрри | 8 |
| Çăл чаватпăр | 9 |
| «Мухтав сана, пĕрчĕ...» | 11 |
| Çынна ырă ту | 12 |
| Август | 13 |
| Ленин | 15 |
| Çеçпĕл хыççăн | 16 |
| Автономи юбилейĕнче | 17 |
| Çĕнĕ завод | 18 |
| Утать пилĕкçуллăх | 19 |
| Çĕр — этемлĕх сăпки | 21 |
| Çирĕп тĕллевпе | 22 |
| Рейхстаг çинчи ялав | 23 |
| Ветерансем | 24 |
| Çĕнтерӳ кунĕ | 25 |
| Тăван хуламăр Шупашкар | 27 |
| Пирĕн ялти тимĕрçĕ | 28 |
| Пионер | 31 |
| Пионерсен кунĕ | 32 |
| Хаваслă çу кунĕсем | 33 |
| Шкула! | 35 |
| Вăл ялан пирĕнпе | 36 |
| Пирĕн лагерь | 37 |
| Çуркунне | 38 |
| Эх, илемлĕ-çке тĕнче | — |
| Килех, Çĕнĕ çул | 41 |

Васкатăп шурă вăрмана . . . . . . . 42
Аслă ниме . . . . . . . . 44
Май сăвви . . . . . . . . . 45
Кăйкăр (поэма)
1. Чул ту . . . . . . . . . 47
2. Вутпа чечек . . . . . . 48
3. «Çын пул!» . . . . . . . 50
4. Тӳпе чĕнет . . . . . . . 51
5. Парне . . . . . . . . . 52
6. Мускава . . . . . . . . 53
7. Ансат-и космонавт пулма? . . . . 55
8. Хитре-çке çĕр . . . . . . —
9. Ĕнен пире . . . . . . . 57
Çăкăр (поэма) . . . . . . . 59

*Для среднего школьного возраста*

Порфирий Васильевич АФАНАСЬЕВ

**ВЕТЛА С СЕРЕЖКАМИ**

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Художник В. Г. БРИТВИН

Редактор **П. Е. Димитриев**
Художественный редактор **Г. С. Самсонова**
Технический редактор **Н. В. Васильева**
Корректор **Р. К. Игнатьева**

ИБ 2004

Сдано в набор 28.01.87 г. Подписано к печати 04.06.87. НТ 14412. Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная № 1. Гарнитура литературная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 5,26. Усл. кр.-отт. 21,62. Учетно-изд. л. 3,0. Тираж 6000 экз. Заказ № 441. Изд. № 80. Цена 25 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР
по делам издательств, полиграфии и книжной торговли.
428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

**Афанасьев П. В.**
А 94 Ярапаллӑ йӑмра. Сӑвӑсемпе поэмӑсем.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1987.— 70 с.

25 п., 6000 экз.

«Ярапаллӑ йӑмра»— Чӑваш комсомолӗн Ҫеҫпӗл Мишши ячӗпе хисепленекен преми лауреачӗн Порфирий Афанасьевӑн ачасене халаллана кӗнеки. Хӑйӗн сӑввисемпе поэмисенче поэт тӑван ҫӗр ӑшши, туслӑхпа мир ҫинчен хавхаланса ҫырать.

ББК 84 Чув 7—5

А $\frac{4803010200—090}{М\ 136(03)—87}$ 80 — 87


25 пус
ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ